Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

33 (8099) № ✻ Юн кун, 2013 çулхи çу (май) уйăхĕн 15-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Туслă çемье Муркашрах пурăнасшăн

***«Пĕр-пĕрне хисеплени, юратни, пĕр-пĕриншĕн тимлени, ачасем сывлăхлă пулни – çемьере чи кирли», – çемье пĕлтерĕшĕ пирки калаçнă чух палăртрĕç Муркаш салинче пурăнакан Макаровсем.***

***Малашлăх пирки тĕплĕн шухăшлама хăнăхнă çамрăксем 2006 çулта çемье çавăрса тепĕр çултанах пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă. Иртнĕ çул вара кĕтнĕ савăнăç çитнĕ – Амиляпа Иван Макаровсен çемйи «Çамрăк çемье» федераци программипе килĕшӳллĕн патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ. «Эпир Муркашрах пурăнасшăн, çавăнпа та пулăшупа усă курса кунта икĕ пӳлĕмлĕ хăтлă хваттер туянтăмăр, амăш капиталĕ те тĕкĕ пулчĕ. Паллах, питĕ савăнтăмăр», – теççĕ çамрăк ашшĕпе амăшĕ.***

***Çемье пуçĕ И. Никитин ИП патĕнче водитель-механикра вăй хурать, Амиля «Россельхозбанкăн» районти хушма офисĕнче тăрăшать. Туслă çемьере икĕ ача телейлĕ ӳсет: кĕçех 6 çул тултаракан Артемий тата виççĕмĕш çулта пыракан Ника хăйсен кăмăлĕсемпе ашшĕ-амăшне хавхалантарса тăраççĕ, пурăнма татах та ытларах вăй параççĕ.***

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**



**Паян – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире ырă та çутă уявпа – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕпе саламлатăп!

Çемье – çынна парнеленĕ чи хаклă пуянлăх. Юратакан, йывăр вăхăтра пулăшакан çынсем юнашар пулсан вара çыннăн вăй татах хутшăнать.

Çемье – обществăн тĕп шăнăрĕ, патшалăх тĕрекĕ, культурăпа халăх йăли-йĕркине упраканĕ. Çын çемьере Тăван çĕр-шыва юратма тата юнашар çынсене хисеплеме вĕренет.

Çемье хаклăхĕсене çирĕплетесси Чăваш Республикин политикинчи приоритетсенчен пĕри пулса тăрать. Патшалăхăн тĕрлĕ енлĕ пулăшăвне тивĕçсе çамрăк çемьесем пурнăç условийĕсене лайăхлатаççĕ. Амăшлăхĕпе ачалăха хӳтĕлемелли майсем те çулсеренех çирĕпленсе пыраççĕ. 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çемьере виççĕмĕш е хыççăнхи ача çуратнăшăн республика паракан амăш капиталĕпе тивĕçтереççĕ. 2013 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчепе виççĕмĕш е хыççăнхи ача çуратнăшăн вăл 3 çул тултариччен уйăхсерен паракан тӳлев çирĕплетнĕ.

Паянхи уяв – хамăр çемьене юратупа хӳтлĕх парнелемелли, пире инкек-синкекрен упранă атте-аннене ырлăхшăн тав тумалли тата тепĕр сăлтав.

Сывăх çынсемпе ăшă хутшăнура пулнине хаклăр, пĕр-пĕрне юратăр, чăтăмлăрах пулăр, ан хирĕçĕр! Сирĕн çемьесенче тăнăçлăх, юрату тата килĕшӳ хуçаланччăр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**МУРКАШ РАЙОНĔН ХИСЕПЛĔ ÇЫННИСЕМ!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Пурнăç çулĕ ачан çемьерен, атте-анне килĕнчен пуçланать. Кунта ача пурнăç илемне курма, ĕмĕтленме, ĕçлеме, аслисене хисеплеме, пулăшма вĕренет. Ача пур енлĕн аталанса ӳсесси те, яваплăха туясси те, ырăпа усала уйăрма вĕренесси те, сывă пурнăç йĕркине суйласа илесси те ашшĕ-амăшĕнченех килет. Ырри те, усалли те çемьеренех пуçланать. Çавăнпа та тăван кил ачашăн чун туртнă вырăн пулса тăтăр тесе тăрăшмалла пирĕн, аслисен. Тăван килте пире яланах ăнланаççĕ, каçараççĕ, пулăшаççĕ, тăван килте чи сывăх çынсем кĕтеççĕ. Яланах çапла пултăрччĕ. Мĕншĕн тесен çакă кашни çыншăн çав тери хаклă, çав тери кирлĕ.

Çемье телейĕ вара пирĕнтен хамăртанах килет. Апла пулсан чун-чĕре ăшшине упрама пĕлмелле. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, юратса пурăннине нимĕн те çитмест. Кун пек чух йывăрлăха чăтса ирттерме, ăна çĕнтерме те çăмăлрах. Ашшĕ-амăшĕн ăшшине, юратăвне курса-туйса ӳсекен ачасем те телейлĕрех пулаççĕ. Вĕсене пурнăçра хăйсен вырăнне тупма та çăмăлрах. Çавăнпа та эсир ачăрсемшĕн ырă тĕслĕх пуласса та шанас килет.

Ачаллă çемьесене пулăшас ыйту çине Раççей Федерацийĕн, Чăваш Республикин Правительствисем тимлĕ пăхаççĕ. Çемьесене патшалăх енчен пулăшни те çакнах кăтартса парать.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, телейлĕ вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатăп. Пĕр-пĕрне юратса, килĕштерсе пурăнмалла пултăр. Ачăрсем савăнăç çеç кӳччĕр.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**Ĕçлĕ визитпа**

## Çыхăнусем йĕркеленеççĕ

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Атăл çи федераци округĕн делегацийĕ шутĕнче майăн 11 – 18-мĕшĕсенче ĕçлĕ визитпа – Китай Халăх Республикинче.***

**Майăн 12-мĕшĕнче** Михаил Игнатьев Мускав тата Пĕтĕм Руç Çветуй Патриархĕн Кириллăн Китайри пĕрремĕш визичĕпе çыхăннă йышăнăва Раççейăн Китай Халăх Республикинчи посолĕн ячĕпе хутшăннă.

**Майăн 13-мĕшĕнче** Чăваш Ен пуçлăхĕ Китай Халăх Республикин Патшалăх Канашĕн Премьерĕпе Ли Кэцяномпа тата Китайăн Аталанупа реформăсен патшалăх комитечĕн ертӳçисемпе тĕл пулнă.

Тĕп мероприятисем Хубэй тата Хунань провинцийĕсенче иртеççĕ.

**Майăн 14-мĕшĕнче** Ухань хулинче (Хубэй провинцийĕ) регионсен хутшăнăвĕсен ыйтăвĕсемпе «çавра сĕтел» пулнă. Кунтах Чăваш Республикин экономика тата инвестици потенциалĕн презентацийĕ иртнĕ, Янцзы юхан шывĕн тури тата вăтам юхăмĕнчи регионсемпе Атăл çи федераци округĕн регионĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси пирки протокола алă пуснă. Раççей делегацийĕ вăрçăра вилнĕ совет доброволец-летчикĕсене асăнса лартнă палăк умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх пĕрремĕш хутшăнусем енсен пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеме кăмăл пуррине кăтартса параççĕ. «Халĕ пирĕн задача килĕшӳсене практикăлла утăмсем тунипе çирĕплетесси пулса тăрать», – тенĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

**Районта**

## Министрсемпе тĕл пулнă

Иртнĕ эрнере район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев Чăваш Ен вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕпе **Владимир Ивановпа** тĕл пулнă. Муркашри лицей çуртне реконструкцилесе ача сачĕ уçассипе, вĕрентӳ учрежденийĕсене тата вĕсенчи штатсене оптимизацилессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă. Владимир Николаевич çитес эрнере те районта пулма, вăл шутра кăçал капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме пăхнă 4 шкула та çитсе курма планлать.

ЧР çĕр хутшăнăвĕсен тата пурлăх министрĕпе **Светлана Енилинăпа** тĕл пулнă чухне ыйтман çĕр участокĕсене ял тăрăхĕсен харпăрлăхне куçарас ĕçсене хăвăртлатасси пирки сăмах пынă. Кунпа çыхăннă кашни ĕçе судра уйрăм пăхса тухнă май çак процедура вăрăма тăсăлать. Светлана Александровна ку енĕпе пулăшма шантарнă.

Иртнĕ шăмат кун районта ял хуçалăх министрĕ **Сергей Павлов** пулнă. Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ростислав Тимофеевпа вăл районти хăш-пĕр хуçалăхсене çитсе курнă, çур аки ĕçĕсем мĕнле пынипе паллашнă.

**Хамăр инф.**

**Çур аки – 2013**

## Ака кал-кал пырать

Районти çĕр ĕçченĕ уяр кунсен кашни сехетне уй-хирте ирттерет. Çу уйăхĕн 14-мĕшĕ тĕлне пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем çуртрисене акма 10352 гектар (74 процент) çĕр хатĕрленĕ.

Çĕр ĕçченĕ çак кун тĕлне çурхи культурăсене пурĕ 6742 гектар çинче (63 процент) акса хăварнă. Ака ĕçĕсене Чкалов яч. хис. хуçалăхпа «Колос» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра, С. Сретинский тата В. Горбунов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вĕçленĕ.

Хуçалăхсем пĕр çул ӳсекен курăксене 369 гектар акнă, çĕр улмине 162 гектар лартнă.

**А. БЕЛОВ.**

**Инкек**

## Пулăшусăр юлмĕç

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Пенза облаçĕнче çул çинчи инкеке пула вилнисен çемйисемпе пĕрле хурланни çинчен пĕлтернĕ. Вăл Министрсен Кабинетне инкек тӳснисемпе вĕсен çемйисене пулăшассин ыйтăвне пăхса тухма хушнă.

Оперативлă даннăйсем тăрăх 2013 çулхи майăн 14-мĕшĕнче ирхи 8 сехет тĕлĕнче Пенза облаçĕнчи «Пенза – Тамбов» трасса çинче Вăрмар район çыннин микроавтобусĕ груз турттармалли МАЗ автомашинăпа çапăннă.

Малтанхи даннăйсем çапла: микроавтобусри 10 пассажир вилнĕ, 8 çын аманнă. Пурте вĕсем – Чăваш Республикинчи Вăрмар район çыннисем. Аманнисем Пензăри васкавлă медицина пулăшăвĕн больницинче. Вĕсемпе психологсем ĕçлеççĕ.

# Халĕ те асрах-ха çав çулсем



**Аслă Çĕнтерӳ уявĕнчен**

Майăн 9-мĕшĕнче тĕнчери мĕн пур прогрессивлă этемлĕх уявсен уявне, фашистла Германие çапса аркатнăранпа, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 68 çул çитнине паллă турĕ. Муркашсем та иртнĕ кĕçнерни кун çак паллă куна чыслăн уявларĕç. Аслă Çĕнтерӳ кунне халалланă уяв мероприятийĕсем пур ял тăрăхĕсенче те, ĕç коллективĕсенче те иртрĕç.

Майăн 9-мĕшĕ. Район центрĕнчи «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕ умĕнче иртенпех çынсем йышлă. Вăрçă çулĕсенчи юрăсем янăраççĕ. Картингистсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç.

Тăван çĕр-шывăн 1941 – 1945 çулсенчи Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранпа 68 çул çитнине халалланă уяв митингне çынсем чылаййăн пухăннă. Кунта вăрçă ветеранĕсем те, вăрçăра вилнисен тăлăх арăмĕсем те, тыл ĕçченĕсем те, шкул ачисем те, район центрĕнчи ĕç коллективĕсен представителĕсем те.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

# Ачасен канăвĕ, пахалăхлă апат-çимĕç...

Канашлуран

**Майăн 6-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, хăшпĕр федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе эрнесеренхи канашлу ирттернĕ. Кун йĕркинчи паянхи актуаллă ыйтусем пирки сăмах пынă унта.**

Республика Пуçлăхĕ малтанах чăвашсен делегацийĕ апрелĕн 29 – 30-мĕшĕсенче Мускавра Японипе Раççейăн пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлессипе ирттернĕ форумне хутшăннин пĕтĕмлетĕвĕ çинче чарăнса тăнă. Ун пирки хаçатăн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕччĕ.

**Ачасен çуллахи канăвне йĕркелессин** ыйтăвĕсене сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова хускатнă. Кăçал пĕтĕмпе 111 пин ачана çу кунĕсенче канма, сывлăхĕсене çирĕплетме тата ĕçлеме майсем туса памалла. Вăл шутра 47 пин ача йывăр условисенче пурăнать. Çак кампани валли пур шайри бюджетран 313,1 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 80 млн тенкĕ нумайрах. Тӳлевсĕр путевкăсене тивĕçекен ачасем ытларах пулĕç.

2013 çулта хула тулашĕнчи лагерьсем 24, çемьесене тата ачасене социаллă пулăшу паракан центрсем çумĕнчи лагерьсем 23, шкулсем çумĕнчи лагерьсем 399, кунсăр пуçне кăçал пĕрремĕш хут палатка лагерĕсем 31 пулмалла.

– Кунта кĕтмен нимĕнле лару-тăру та пулма пултараймасть, – палăртнă Михаил Васильевич. – Пур лагерьсем те йĕркеллĕ ĕçлемелле, ачасен канăвне кирлĕ пек йĕркелесси – пирĕн тивĕç.

Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов пĕлтернĕ тăрăх путевкăсен 90 процентчĕпе ачасен ашшĕ-амăшне тивĕçтернĕ ĕнтĕ.

**Апат-çимĕç продукчĕсен пахалăхĕ** те – пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри. «Раççей пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕ май суту-илӳре пахалăхĕпе тивĕçтермен продукци те пулма пултарать. Çакă уйрăмах ачасемшĕн сиенлĕ пулĕ», – асăрхаттарнă Михаил Игнатьев. Вăл ответлисене ку тĕлĕшпе тимлĕрех пулма сĕннĕ.

Роспотребнадзорăн Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçи Надежда Луговская сывлăха çирĕплетмелли учрежденисенче май уйăхĕнче тĕрĕслев пуçланасси пирки хыпарланă. Апрелĕн 20-мĕшĕ тĕлне лагерьсен 97 процентчĕ апат-çимĕç продукцийĕ илсе тăма килĕшӳсем тунă. Май уйăхĕнче продукципе тивĕçтерекенсемпе семинар-канашлу ирттерме пăхнă. Н. Луговская шучĕпе хамăр патăмăрти продукцин пахалăхĕ ытти регионсенчен кӳрсе килекеннисенчен лайăхрах.

Майăн 20 – 25-мĕшĕсенче Шупашкарта **пĕтĕм тĕнчери VI кинофестиваль** иртет. Хатĕрленӳ мероприятийĕсемпе культура, национальноç тата архив ĕçĕсен министрĕ Вадим Ефимов паллаштарнă.

Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева майăн 1 – 5-мĕшĕсенче **Чăваш Енре çамрăксен массăллă информаци хатĕрĕсемпе киностудийĕсен пĕтĕм тĕнчери «Волжские встречи – 24» фестивалĕ** ăнăçлă иртни пирки каласа панă.

# Халĕ те асрах-ха çав çулсем

Аслă Çĕнтерӳ уявĕнчен



(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Районта çулленех Çĕнтерӳ кунне халалласа Муркаш – Ваçкасси маршрутпа велосипедистсен чупăвне ирттересси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Кăçал та митинг пуçланас умĕн велосипедистсем уяв лапамĕнчен старт илчĕç.

Иртнĕ вăрçăри Çĕнтерӳ çăмăл килмен. Вăл инкек, хуйхă, нуша кӳмен çемье районта çук та темелле. Районтан вăрçă хирне 9845 çын тухса кайнă. 5491 салтак каялла таврăнайман, паянхи мирлĕ пурнăçшăн пуçĕсене хунă. Çакăн пирки аса илтерчĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)** савăнăçлă митинга уçса пухăннисене уявпа саламланă май. Шел пулин те, вăрçăран Çĕнтерӳпе таврăннисенречĕ те сайралансах пырать. Паянхи куна районта вăрçă ветеранĕсем 65-ĕн, вилнĕ салтаксен тăлăх арăмĕсем 5-ĕн, Ленинград блокадинче пулнисем 2-ĕн пурăнаççĕ.

Çĕнтерĕве кашниех хăйĕн тӳпине хывнă. Çар çыннисем фронтра, хĕрарăмсемпе ватă çынсем, ачасем тылра Çĕнтерĕве туптанă. 5 салтак Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ, тепри Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ пулса тăнă. Вĕсен паттăрлăхĕ паянхи çамрăксемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.

Хăйсен мăшăрĕсем, ашшĕсем вырăнне тăрса тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр выçăллă-тутăллă вăй хунисене те ырăпа палăртрĕ Ростислав Николаевич. Пирĕн вĕсен паттăрлăхĕ пирки нихăçан та манмалла мар. Çитес çул района йĕркеленĕренпе 70 çул çитет. Çавна май район энциклопедине хушăмсем кĕртсе ăна çĕнĕрен пичетлесе кăларма, район историйĕпе паллаштаракан кĕнеке хатĕрлеме палăртнă. Район çыннисен паттăрлăхĕ пирки каласа панисем унта тивĕçлĕ вырăн йышăнĕç.

Вăрçă ветеранĕсем умĕнче эпир яланах парăмра. Патшалăх вĕсене тимлĕхсĕр хăвармасть. Иртнĕ çулсенче вăрçă участникĕсене çăмăл автомашинăсемпе тӳлевсĕр тивĕçтерчĕç, 2008 çултан тытăнса вара вĕсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатассипе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Иртнĕ 5 çул хушшинче районти 227 вăрçă ветеранĕпе вăрçăра вилнĕ салтакăн тăлăх арăмĕ тата вĕсен çемйи хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă. Кăçал вăрçă ветеранĕсем 15 çын сертификата тивĕçнĕ, вĕсенчен 10-шĕ çĕнĕ хваттер илнĕ е çурт-йĕрне çĕнетнĕ.

Муркашсене Аслă Çĕнтерӳ уявĕпе республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, республика Пуçлăхĕн Администрацийĕ, Чăваш Ен Правительстви ячĕпе гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăрăвăн Чăваш Республикинчи патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров, Чăваш Республикин çар комиссариачĕн Муркашпа Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕ Александр Кочуров саламларĕç.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин участникĕ Николай Стрельцов иртнĕ вăрçă çулĕсене аса илчĕ, уявпа саламласа пурне те ырлăх-сывлăх сунчĕ. Афган вăрçин участникĕсен районти союзĕн ертӳçин çумĕ Сергей Андреев, район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксен правительствин председателĕ Ольга Прокопьева пухăннисене уявпа саламларĕç. Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем уява пухăннă ветерансене, вилнĕ çар çыннисен тăлăх арăмĕсене чĕрĕ чечексем пачĕç.

Хыççăн çамрăк армеецсемпе кадетсен парачĕ иртрĕ. Уяв митингĕ Çĕнтерӳ паркĕнче вилнĕ салтаксене асăнса лартнă палăкпа Мухтав монуменчĕ умне гирляндăпа чечек кăшăлĕсем хунипе вĕçленчĕ. Ветерансен Муркашри халăх хорĕ Çĕнтерӳ кунне халалланă уяв концерчĕн программипе савăнтарчĕ.



Уявăн каçхи программи те интереслĕ те хаваслă иртрĕ. 20 сехетре вăл Çĕнтерӳ кунне халалласа «Эпĕ ас тăватăп! Эпĕ хăпартланатăп!» ятпа ирттернĕ пĕрремĕш район фестивалĕн çĕнтерӳçисен гала-концерчĕпе пуçланчĕ. Пухăннисене уявпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, Муркаш райпо канашĕн председателĕ Борис Андреев саламларĕç. Фестиваль çĕнтерӳçисем дипломсемпе парнесене тивĕçрĕç.

Çамрăксен «Пурне те ятран аса илер» акцийĕ илĕртӳллĕ иртрĕ. 22 сехет те 30 минутра уяв фейерверкĕ пулчĕ. Уяв каçĕнче ташă-юрă 23 сехетченех янăрарĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



# Муниципаллă служащисен – хăйсен награда

Чăваш Енре муниципаллă служащисем валли патшалăх наградине туса хунă. Ку вăл «За безупречную службу в органах местного самоуправления в Чувашской Республике» уйрăмлăх палли. Кун пирки республика муниципаллă йĕркеленĕвĕсен канашĕн съездĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пĕлтернĕ.

Республика Пуçлăхĕ палăртнă тăрăх çак награда вырăнти хăйтытăмлăха аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывнă муниципаллă служащисене хавхалантарма май парĕ.

Саламлатпăр



Юратнă та хаклă çыннăмăра – Çурлатăри ялĕнче пурăнакан **Василий Кузьмич КРЮЧКОВА** майăн 15-мĕшĕнчи 80 çулхи сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Утас çулу санăн вăрăм та такăр пултăр. Турри вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Малашне та ачăрсемпе, мăнуксемпе, тăвансемпе савăнса та килĕштерсе пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр. Пире пулăшса тăнăшăн, çемье ăшшине упраса пурăннăшăн чĕререн тав тăватпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей, савăнăç. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе хĕрĕсем, кĕрӳшĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ тата çывăх тăванĕсем.**

12 мая исполнилось 75 лет со дня рождения любящей матери, заботливой бабушки, суперценного работника, замечательного человека – **Марии Васильевны ВИНОГРАДОВОЙ**. 57 лет назад приехала она в Моргауши молодым специалистом из соседней Марийской Республики, да так и осталась здесь, встретив свою любовь. Более 40 лет проработала на ниве культуры, а затем объединяла под своим крылом ветеранов войны нашего района. И где бы она ни работала, всю себя отдавала бескорыстному служению обществу. Мы желаем тебе здоровья, бодрости духа, неиссякаемой энергии и выражаем искреннюю любовь.



Лебединой стаей куда-то
Улетают из жизни года,
И не будет им больше возврата,
Повторить их нельзя никогда.
Пусть сегодня звучат поздравленья,
Их так много, что хватит на век.
Так живи же, душой не старея,
Наш любимый, родной человек.

**С поздравлением дети и внуки: семьи Верховцевых, Орловых, Виноградовых.**

Патшалăх пĕрлехи экзаменĕсем

# Шутлă кунсем юлчĕç

***Кĕçех 11-мĕшсен шкулпа сыв пуллашма вăхăт çитет. Анчах та алла аттестат иличчен умра чи ответлă тапхăр – экзаменсем. Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсем мĕнле йĕркепе иртеççĕ? Çак ыйтăва район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхне З. ДИПЛОМАТОВĂНА хуравлама ыйтрăмăр.***

– Çак вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче 11 класс пĕтерекен 245 çамрăк пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытать, вĕсенчен иккĕшĕ, малтанхи пек, йăлана кĕнĕ формăпа. Кунсăр пуçне малтанхи çулсенче шкул пĕтернĕ тепĕр 6 çамрăк та пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытасси пирки заявленипе пĕлтерчĕç.

Экзаменсем хăш кун иртесси паллă: майăн 27-мĕшĕнче – вырăс чĕлхипе, июнĕн 3-мĕшĕнче математикăпа экзамансем Муркашри вăтам шкулта иртеççĕ. Майăн 30-мĕшĕнче – информатикăпа (9 ача), биологипе (66), историпе (74) экзаменсем Муркашри вăтам шкулта. Июнĕн 6-мĕшĕнче ют çĕр-шыв чĕлхипе (9) тата физикăпа (75) экзаменсем Етĕрнере иртеççĕ. Июнĕн 10-мĕшĕнче – химипе (30) тата обществознанипе (145) экзаменсем Муркашри вăтам шкулта, июнĕн 13-мĕшĕнче географипе (25) тата литературăпа (5) экзаменсем Çĕрпӳ хулинче пулаççĕ. Резерв кунĕсене те палăртнă: июнĕн 15, 17, 18, 19-мĕшĕсем, çав кунсенче экзаменсене Шупашкарта тытма тивет.

Экзаменсем вăхăтĕнче ĕçлекен операторсене çирĕплетнĕ. Вĕсен ответлăхĕ питĕ пысăк: ĕç инструкцине пăснăшăн пысăк штраф пăхса хунă – 20 пин тенкĕ таранах. Кăçал экзамен пыракан кашни класра тата коридорсенче видеосăнав оборудованийĕ пулать.

**– Тăххăрмĕшсен патшалăх пĕтĕмлетӳ аттестацийĕ мĕнле иртет?**

– Тăххăрмĕшсем экзаменсене çак формăпа 371 ача тытать, тепĕр 3 çамрăк – малтанхи формăпах. Экзаменсем ирттермелли икĕ пункт палăртнă – Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулсем.

Экзаменсем çак кунсенче иртеççĕ: майăн 28-мĕшĕнче – математикăпа, майăн 31-мĕшĕнче – обществознанипе, физикăпа, химипе, ют çĕр-шыв чĕлхипе, июнĕн 4-мĕшĕнче – вырăс чĕлхипе, июнĕн 7-мĕшĕнче – историпе, биологипе, литературăпа, географипе, информатикăпа, июнĕн 13-мĕшĕнче – чăваш чĕлхипе.

Тăххăрмĕшсем валли те резерв кунĕсене çирĕплетнĕ: июнĕн 11-мĕшĕ тата 14-мĕшĕ.

Каласа хăвармалла, вырăс чĕлхин экзаменĕнче орфографи словарĕпе усă курма юрать, физика тата хими предмечĕсемпе – программăллă мар калькуляторпа, географипе – линейка тата географи атласĕ тата программăллă мар калькулятор.

Экзаменсем тĕрлĕ вăхăта тăсăлаççĕ. Вырăс чĕлхи, математика, литература, чăваш чĕлхи экзаменĕсем 3 сехет те 55 минут пыраççĕ, физика, истори тата обществознани предмечĕсемпе – 3 сехет, информатикăпа, биологипе – 2 сехет çурă, химипе, географипе тата ют çĕр-шыв чĕлхипе – 2 сехет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Паян – Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунӗ

# Ҫемье аталанӑвӗнче – патшалӑх пулӑшӑвӗ

1993 ҫулхи сентябрӗн 20-мӗшӗнче ООН-ӑн генаральнӑй ассамблейи Пӗтӗм тӗнчери ҫемье кунне ҫирӗплетнӗ. Уява, паллах, ахальтен шухӑшласа кӑларман: общественноҫа ҫемьепе ҫыхӑннӑ ыйтусем ҫине тимлӗх уйӑрма хистенипе ҫыхӑннӑ ҫакӑ. Ҫемье обществӑран уйрӑм аталанма пултараймасть. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑл обществӑри ҫынлӑх хаклӑхӗсене упрама кӑна мар, патшалӑха ҫирӗплетме те пулӑшать. Ҫавӑнпа та патшалӑх ҫемьесене мӗнле тимлӗх уйӑрнинчен унӑн пуласлӑхӗ пирки те калама пулать.

Ҫемье кунӗ кашнинех ҫемье пирӗн пурнӑҫра мӗнле вырӑн йышӑннине, унӑн пӗлтерӗшӗ пирки тепӗр хут шухӑшласа илме май парать. Ҫемье кашни ҫыннах кирлӗ.

Паянхи кун вара тулли мар ҫемьесем нумайӑи, ҫемьесем арканни чӑнах та ҫивӗч ыйту пулса тӑрать. Пирӗн район та кунтан инҫе тӑмасть. Акӑ иртнӗ тӑватӑ уйӑхри кӑтартусемпе паллашар-ха. Ҫак тапхӑрта кӑҫал пурӗ 37 ҫемье йӗркеленнӗ, анчах та арканнисем те шӑпах ҫавӑн чухлӗ, ҫитменнине пӗлтӗрхипе танлаштарсан 12 ытларах. Апла пулсан ку вӑхӑтра районта пӗр ҫемье те йӗркеленмен тесен те йӑнӑш мар. Ҫемьене аркатма нумай кирлӗ мар, ӑна упраса пурӑнма вара питӗ йывӑр. Ҫитменнине хальхи вӑхӑтра мӑшӑра уйрӑлма та ҫӑмӑл: судра ытларах чух характерсем пӗр килмен тени тӗл пулать. Ачан чӗрине вара ҫак аркану саманчӗ нумайлӑха юлать...

Хальхи вӑхӑтра ҫемьесене ытларах чухне вӗренсе пӗтернӗ, ӗҫре ӳсӗм ҫулӗ ҫине тӑрса укҫа «тытма» пуҫланӑ хыҫҫӑн кӑна йӗркелеме тӑрӑшаҫҫӗ. Ачасене те каярах ҫуратаҫҫӗ, нумай чух – пӗрре е икӗ ача. Хӑшӗсем вара пачах та ача ҫуратмаҫҫӗ, вӗсене пӑхса ӳстерме, вӗрентсе пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларма укҫатенкӗ ҫитменнипе ҫыхӑнтараҫҫӗ ҫакна. Пирӗн районта асӑннӑ тапхӑрта 121 ача ҫуралнине регистрациленӗ: Муркаш, Москакасси, Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗсенче ытти тӑрӑхрисенчен ача нумайрах ҫуралнӑ.

Ҫемьепе ҫыхӑннӑ тепӗр самант пирки те асӑнса хӑвармалла. Хальхи вӑхӑтра ытларах «гражданский брак» тенине илтме тивет. Ку та вӑхӑт пулӑмӗ. Ҫын хӑй ҫине ытлашши тивӗҫ илесшӗн маррипе, пӗрпӗрне итлесе ҫул парасшӑн маррипе ҫыхӑннӑ пулӗ ҫакӑ, тен хӑв шухӑшланӑ вӑхӑтра алӑк хупса тухса кайма меллӗ пулнипе те.

Ҫапах та патшалӑх пулӑшӑвӗ пирки каламасӑр иртме ҫук. Федераци шайӗнчи амӑш (ҫемье) капиталӗ, республика шайӗнчи амӑш капиталӗ – ҫаксем хӑйсем ҫеҫ ҫемьесемшӗн питӗ пысӑк пулӑшу. Пӗр вунӑ ҫул каялла кӑна-ха кун пек пулӑшӑва тивӗҫмен. Кунсӑр пуҫне ҫамрӑк ҫемьесем, нумай ачаллӑ ҫемьесем тивӗҫекен пулӑшу та пӗчӗк мар. Пулас амӑшӗсене, тин кӑна ҫуралнӑ ачасене пахалӑхлӑ медицина пулӑшӑвӗпе тивӗҫтересси те ҫакӑн шутнех кӗрет. Йывӑр лару-тӑрӑва лекнӗ ҫемьесене, ачасене пулӑшасси те патшалӑх хӑй умне лартнӑ тӗп задачӑсенчен пӗри тесе шутлать. Апла патшалӑх ҫемье патне ҫурӑмпа ҫаврӑнман-ха.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

01 пӗлтерет, асӑрхаттарать

# Ҫулӑмра пиҫсе кайнӑ

Пушар хӑрушсӑрлӑхӗ пирки асилтерсех тӑратпӑр пулин те, ӑна шута хуманнисем «хӗрлӗ автан» кӳрекен инкекрен хӑтӑлса пӗтейменни тӑтӑшах куҫ умне пулса пырать. Асӑрхаттару вырӑнне электричество приборӗсен юсавлӑхне илер-ха. Кун ҫумне ӳсӗрле пирус туртнине хушсан каялла тавӑрмалла мар ҫухату пуласси куҫ кӗретех. Ҫуллenex ҫакнашкал сӑлтав миллионшар тенкӗлӗх ҫухату алӑкне уҫать. Ҫунатпӑр, тӳсетпӗр, анчах электричествӑпа усӑ курнӑ чух пушар хӑрушсӑрлӑх правилисене пӑхӑнассине ҫав-ҫавах иккӗмӗш вырӑна хӑваратпӑр.

Кӑҫал ака уйӑхӗн 28-мӗшӗнче районта 18-мӗш пушар регистрацилерӗмӗр. Пӗлтӗр ҫак вӑхӑта вут-кӑвар алхаснипе 15 инкек пулнӑччӗ. «Хӗрлӗ автан» тыткӑнӗнче иртнӗ ҫул 3 ҫын пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлнӑ пулсан, тав Турра, кӑҫал ун пек инкек ҫук. Анчах пулма пултаратчӗ...

Асӑннӑ кун 4 сехет те 44 минутра пирӗн патӑмӑра Хунтӑкассинче пурӑнмалли ҫуртра пушар тухни пирки пӗлтерчӗҫ. Инкекпе кӗрешме Муркашри пушар хурал машинипе пӗрлех Мӑн Сӗнтӗрти тата Шомикри уйрӑм постсен пушар машинисем тухрӗҫ. Пулӑшу вӑхӑтра ҫитрӗ пулин те, йывӑҫ ҫурт тӗппипех кӗлленчӗ.

Епле аталаннӑ-ха инкек? Седловсен пичӗшӗсемпе шӑллӗсем пӗрле пурӑннӑ. Инкек умӗнхи кунхине вӗсем тата пӗрин ывӑлӗ кил хуҫалӑхра ӗҫленӗ. Ӗҫ хыҫҫӑн аншарли тыткӑнне лексе ыйха путнӑ. Ирхине ҫакскерсем тӗтӗм шӑршипе вӑранса каяҫҫӗ. Аслисем пӳрт верандинчи ҫулӑм витӗрех тула тухаҫҫӗ пулсан, ҫамрӑк каччӑ пӳрт чӳречине ҫӗмӗрсе урама тухать.

Ҫулӑм витӗр кил картине тухнисем алӑсем тата пит-куҫ пиҫсе кайнипе паян виҫҫӗшӗ те больницӑра сиплеҫҫӗ. Пушар сӑлтавӗпе тӗпчев ӗҫӗсем пыраҫҫӗ.

**А. ИЗОНОВ,**
**районти патшалӑх пушар надзор уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ.**

# Т е л е п р о г р а м м а

с 15 по 19 мая 2013 года

## СРЕДА, 15.05

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.20 Т/с «ТОРГОВЫЙ ЦЕНТР» 16+
16.10 «Пока еще не поздно» 16+
17.00 «Я подаю на развод» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «АННА ГЕРМАН» 12+
0.50, 3.05 Х/ф «БЬЮТИФУЛ» 18+
3.35 «Трианон. Шифровка с того света»

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.50 «Дело Х. Следствие продолжается» 12+
13.50, 16.35 Вести. Дежурная часть
14.50 «Чужие тайны. Времена года» 12+
15.35 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
17.45 Т/с «КАМЕНСКАЯ-6» 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 «Прямой эфир» 12+
21.30 Т/с «ЛЮДМИЛА» 12+
23.25 «Свидетели. «Сергей Юрский»
1.20 Вести +
1.45 Х/ф «КОЛЬЕ ШАРЛОТТЫ»
3.05 Т/с «ЧАК-4» 16+
4.00 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чӑваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чӑваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чӑваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.10, 23.20 Весь этот джаз!
11.20, 1.55 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.15 Власть факта. «Две Кореи»
12.55, 18.05 Д/с «Путешествия из центра Земли»
13.50 «Полиглот» Испанский с нуля за 16 часов! №2
14.35 Д/с «Испанский след»
15.10 Красуйся, град Петров! Зодчий Николай Васильев
15.40, 19.30, 23.30 Новости культуры
15.50 Дж. Лондон. Телеспектакль «МАРТИН ИДЕН»
17.00 «Мировые сокровища культуры»
17.15 «Классика и джаз в «Царицыно»
19.00 «Континент»
19.45 Главная роль
20.00 «Абсолютный слух»
20.40 «Полиглот» Испанский с нуля за 16 часов! №3
21.25 Д/ф «Православие в Китае»
22.10 Магия кино
22.55 «Исторические путешествия Ивана Толстого» «Загадочные преступления»
23.50 Т/с «КОРОЛИ»
1.15 Л. Бетховен. Концерт для фортепиано с оркестром №3. Солист Д. Мацуев. Дирижер В. Федосеев
2.50 Д/ф «Эдгар По»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Первая кровь» 16+
10.50 «До суда» 16+
11.55 Суд присяжных 16+
13.25 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.35 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
16.25 «Прокурорская проверка» 16+
17.40 «Говорим и показываем» 16+
19.30 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
22.30 Футбол. Лига Европы УЕФА. Финал
0.40 Х/ф «ПОСЛЕДНИЙ ГЕРОЙ» 16+
2.35 Квартирный вопрос 0+
3.40 Дикий мир 0+
4.15 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК» 16+
5.10 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

## ЧЕТВЕРГ, 16.05

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.30 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 12+
15.20 Т/с «ТОРГОВЫЙ ЦЕНТР» 16+
16.10 «Пока еще не поздно» 16+
17.00 «Я подаю на развод» 16+
18.50 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят». 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «АННА ГЕРМАН» 12+
22.30 «Вечерний Ургант» 16+
23.00 Конкурс «Евровидение-2013» Второй полуфинал. Прямой эфир
1.20, 3.05 Х/ф «ИЩУ ДРУГА НА КОНЕЦ СВЕТА» 16+
3.25 «Сергей Бодров. Где ты, брат?» 12+

### РТР

5.00 Утро России
9.00 «1000 мелочей»
9.45 «О самом главном»
10.30 «Кулагин и партнеры» 12+
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.50 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.50 «Дело Х. Следствие продолжается» 12+
13.50, 16.35, 4.35 Вести. Дежурная часть
14.50 «Чужие тайны. Времена года» 12+
15.35 Т/с «ТАЙНЫ ИНСТИТУТА БЛАГОРОДНЫХ ДЕВИЦ»
17.45 Т/с «КАМЕНСКАЯ-6» 12+
20.30 Спокойной ночи, малыши!
20.40 «Прямой эфир» 12+
21.30 Т/с «ЛЮДМИЛА» 16+
23.25 «Поединок» 12+
1.00 Вести +
1.25 Х/ф «КОЛЬЕ ШАРЛОТТЫ»
2.45 Т/с «ЧАК-4» 16+
3.40 Комната смеха

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чӑваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Активная молодежь
9.20-9.45 Родительский день
11.30-11.50 Вести-Чӑваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.30-17.50 Вести-Чӑваш ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.10, 23.20 Весь этот джаз!
11.20, 1.55 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.15 «Абсолютный слух»
12.55, 18.05 Д/с «Путешествия из центра Земли»
13.50, 20.40 «Полиглот»
